тыл ĕçченĕсем

# ĔМĔР АСРА ТЫТМА

75 ÇĔНТЕРӲ! 1945–2020

## Тылра Аслă Çĕнтерĕве çывхартма кунĕн-çĕрĕн тар тăкнисем пирки мĕншĕн маннă-ши?

**Иртнĕ çул «Суварта» «Шутланман фронт» ятпа документсен пуххинчен тăракан тĕрленчĕксен ярăмĕ пичетленнĕччĕ. Вăл мана тарăн шухăша ячĕ. 1941 – 1942 çулсенче хамăр тăрăхрах хӳтĕлев хатĕрĕсем чавни пирки ытла та сахал пĕлетпĕр-çке! Вăрçăра тăшманпа тӳрремĕнех çапăçнă ентешсем пирки тĕрлĕ çулсенче нумай материал пухнă, хаçатсенче çырнă, Культура çурчĕсемпе шкулсенче музейсем йĕркеленĕ. Фронтовиксене яланах чыс та хисеп тивнĕ, анчах çав вăхăтрах тылра Аслă Çĕнтерĕве çывхартма кунĕн-çĕрĕн тар тăкнисем пирки питех калаçман.**

### 17 тултарасса та кĕтмен

Уйрăмах «окопа» çӳренисем пирки сăмахламан. Хаяр хĕл кунĕсенче хĕрсемпе хĕрарăмсем, ачасемпе аслă çулти кинемисем хӳтĕлев сооруженийĕсем чавнă, ДЗОТсемпе ДОТсем, блиндажсем хатĕрлеме патвар вулăллă юмансем, диаметрĕ 30-35 сантиметртан кая мар пулнă, каснă, вĕсене вырăна сĕтĕрсе тухнă, кирлĕ пек вырнаçтарнă. Хӳтĕлев хатĕрĕсем чавма 17 çултан иртнисене çеç явăçтармалла тенĕ пулин те, çын çитменнине кура çамрăкраххисене те мобилизацилеме пуçланă, вĕсене те алла лумпа кĕреçе, киркка е пуртă тыттарнă. Плана пурнăçламаллах пулнă! Хушнине еплерех пурнăçланине çирĕп тĕрĕслесе тăни каламасăрах паллă. Ĕçрен пăрахса кайма юраман – ара, вăрçă вăхăчĕ вĕт!

Пăва районĕнчи Элшел шкулĕнчи музейре 1985 çулта çырса илнĕ темиçе асаилӳ упранать:

*«Эпĕ, Анна Сергеевна Гаврилова, вăрçă пуçланнă çул 7 класс пĕтертĕм. 16 çултаччĕ. Хĕлле, 1942 çулхи январь уйăхĕнче пире, 8-мĕш класра вĕренекен ачасене, Вырăс Киштекĕ çывăхне окоп чавма ячĕç. Питĕ сивĕччĕ, 40-42 градуса та çитетчĕ. Сивви çеç мар, çимелли çукки питĕ аптăрататчĕ. Те эпир шутланман – колхоз çитĕннисем валли çеç апатçимĕç илсе килетчĕ, эпир килтен илсе тухнипех çырлахнă. Çапла эрне нушалантăмăр...»*

*«Эпĕ, Вера Степановна Дедушкина, 1926 çулта çуралнă. 15-рех окопсемпе траншейăсем чавнă çĕре хутшăннă. Вăрманта йывăç касса хатĕрлеттĕмĕр те сĕтĕрсе тухаттăмăр...»*

*«Эпĕ, Сергей Степанович Картламаев, 1925 çулта çуралнă. 10-мĕш класра вĕреннĕ чухне пире окоп чавма илсе кайрĕç. Питĕ сивĕччĕ, 40 градусран та иртсе каятчĕ. Шăннă çĕре чавма йывăрччĕ, çапах та тăрăшаттăмăр, лумпа та кирккапа ĕçлеттĕмĕр...»*

Шел пулин те, çакăн пек асаилӳсем нумаях мар, халĕ ĕнтĕ çырса илес тесен те пултараймăн...

### Чăвашсене ытларах та лекнĕ пулĕ

Хусан хӳтĕлев чиккине хатĕрлеме ытти халăх çыннисемпе пĕрлех чăвашсем те хастар хутшăннă. Тен, вĕсене çак йывăр тиев ытларах та лекнĕ пулĕ? Чăваш Республикипе илес пулсан хӳтĕлев сооруженийĕсем Звенигово затонĕнчен пуçласа Энĕш юханшывĕ тăрăх Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Вăрмар, Тăвай районĕсен территорийĕсем витĕр тăсăлса Тутар Республикин Кайпăс районне



Тăвайри стела.

тухмалла пулнă. Асăннă районсем çар строительствин 5-мĕш номерлĕ тăрăхне кĕнĕ. Паллах, ĕçсене Хусан гарнизонĕнче тăракан инженери çар специалисчĕсем йĕркелесе-тĕрĕслесе тăнă, çавăнпа кашни районтах салтаксемпе офицерсен пысăках мар ушкăнне вырнаçтарнă. Строительствăн штабне ялти шкулта, клубра е правленире йĕркеленĕ.



Вăрмар районĕнчи Чупайри стела.

### Архива кайнин усси пулмарĕ

Эпĕ хӳтĕлев сооруженийĕсем пирки материал пухас тесе Хусанти тата Шупашкарти архивсенче пулса куртăм. Тĕллевĕм – окопсемпе траншейăсен йĕрĕсен карттине ӳкерсе илессиччĕ, строительство вăхăтĕнче çынсем инкек курнине актпа çирĕплетнипе çирĕплетменнине тĕпчессиччĕ. Шел, тĕллевĕм пурнăçланаймарĕ. Халĕ те чылай хыпара вăрттăннисен шутĕнчен кăларман иккен-ха (чăн та, 2000 çул ку темăпа çыхăннă чылай фондпа архивсене усрĕç ĕнтĕ, çапах та «регламент» тесе çыпăçтарса хунă ĕçсем чылаях). Юрий Скворцов писатель хăçанах-ха «Уках хурăнĕ» повеçĕнче 17-ри хĕр окоп чавнă вăхăтра шăнса пăсăлнине, йывăр чире кайса пурнăçран уйрăлнине чуна хумхантармалла çырса кăтартнă-çке!

### Хирĕçлемелли мар чăнлăх

Ирина Кузьмина «Окоп чавакансене аса илекен пулĕши?» статйинче («Сувар», 19 №) тĕрĕс шухăш палăртать: Аслă Çĕнтерĕве çывхартнă пĕр ăрăва та манмалла мар, уйрăмах тыл ĕçченĕсене. Çĕнтерӳ тылра туптаннă тени хирĕçлемелли мар чăнлăх! Çавăнпа 1941 – 1942 çулсенчи хĕллехи вăхăтра хӳтĕлев сооруженийĕсем хатĕрлеме хутшăннă паттăрсене (урăхла еплекалайăн!) халалласа лартнă палăксем кашни районтах пулмалла. Ку енĕпе Чăваш Енре чылай ĕç туса иртнересçĕ. Акă, тĕслĕхрен, Етĕрне районĕнче «Сăр хĕрринчи хӳтĕлев чикки» туризм маршручĕ ĕçлет. Упранса юлнă хӳтĕлев сооруженийĕсемпе паллашма питĕ интереслĕ!

Вăрмар районĕнчи Чупай ялĕнче окоп чавакансене халалласа 2015 çулта стела уçрĕç. Ку ахальтен мар, ялта строительствăна йĕркелесе тăракан штаб вырнаçнă пулнă, саперсен пысăках мар ушкăнĕ тăнă. Районти ытти енсенчен килнĕ çынсем кунта хваттерте пурăннă. Ял тавра окопсемпе траншейăсен йĕрĕсем халĕ те курăнаççĕ-ха. Хусан хӳтĕлев чикки Вăрмар районĕнчи Энĕшпуç ялĕ тĕлĕнче ункăланса пуçтарăннă та Тăвай сали еннелле тăсăлнă. Энĕшпуçри шкулти Паттăрлăх музейĕнче окоп чавакансене халалласа ӳкернĕ картина упранать, çавăн пеккиех Тăвайри музейре те пур.

Тăвай районĕ Тутарстанăн Кайпăс тата Апас районĕсемпе чикĕленет. Тарăн çырмаçатраллă тăрăх. Тарăн çырмасем хăйсемех лайăх хӳтĕлев хатĕрĕсем. 78 çул каялла çак вырăнта пин-пин чăваш окопсем, траншейăсем чавнă, çывăхри вăрмантан кĕреш пек юмансене касса илсе тухнă та ДЗОТсем, ДОТсем хатĕрленĕ. Çав паттăрсене халалласа Тăвайĕнчен Тутарстан еннелле тăсăлакан сăрт çине питĕ мăнаçлă стела вырнаçтарнă. Сăмах майăн палăртар: Чупайри стелăна та, Тăвайрине те хатĕрлеме халăх хастар хутшăннă – укçа-тенкĕпе те, ал вăйĕпе те. Мĕншĕн сыртăм-ха çак йĕркесене? Чăваш Енри тĕслĕх пирĕншĕн тĕслĕх мар темелле мар. Пĕр-пĕринчен ыррине вĕренни пĕртте начар мар.

Юлашки вăхăтра районсен «Астăвăм» кĕнекисем пичетленчĕç. Хăш-пĕр ялсем те хăйсен кăларăмĕсене кун çути кăтартрĕç, малашне те пичетленĕç ун пек кĕнекесем. Вĕсенче тыл ĕçченĕсене халалланă пайсем чи малта пулмалла пек туйăнать.

**Василий ЦЫФАРКИН.**
Пăва районĕ,
Элшел ялĕ.
Автор сăнӳкерчĕкĕсем.